Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

90 (7407) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи октябрĕн (юпа) 25-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ



Елена Николаевна Семенова паян районти тĕп больницăра терапевтра вăй хурать. Унăн пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ 30 çул ытла. Çак тапхăрта вăл тĕп врач çумĕ пулса та, аслă терапевтра та вăй хунă. Халĕ вăл яшсене çара ăсатакан комиссин аслă врачĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: Е.Н. Семенова.

Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.

Вулакансенчен ыйтусем кĕтетпĕр

Депутатпа калаçатпăр

Районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" тата вырăнти радиовещани редакцийĕсем ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне В.Г. Данилова калаçăва чĕнеççĕ.

Унччен депутатсене суйлавçăсем наказсем паратчĕç. Паян ку йăла çук. Апла пулин те ял çыннисем депутат вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессе, сĕнĕвĕсене шута илессе, пулăшасса шанаççĕ.

Хаклă вулакансем, В.Г. Данилов депутат ячĕпе сирĕнтен ыйтусем кĕтетпĕр, сĕнӳсем йышăнатпăр. Вĕсене район хаçачĕн редакцине çырупа, электронлă почтăпа ярса пама пултаратăр е 2-12-82 номерлĕ телефонпа ĕç кунĕсенче шăнкăравласа пĕлтерме те юрать. Çавăн пекех хăвăрăн ыйтăвăрсемпе шухăшăрсене районти радиовещани редакцине (район администрацийĕн 120-мĕш пӳлĕмĕ) кĕрсе калама пултаратăр.

Ыйтусене ноябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнатпăр. Теп-

рер эрнерен райхаçатра депутат сирĕн ыйтусене хуравланине пичетлетпĕр. Уйрăм ыйтусене хуравланисем вырăнти радио хумĕсем çине те тухĕç.

В.Г. Данилов депутат кашни ыйтăвах хуравлама шантарать.

Йывăç кунне хутшăнса

Ешертĕр тăван тавралăх

Чăваш Республикин Президенчĕ 2005 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче «Йывăç кунне иртте-ресси çинчен» 30-мĕш номерлĕ Указ йышăннăччĕ. Ăна пурнăçа кĕртсе пынă май пирĕн районта та сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Акă, сентябрĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 20-мĕшĕччен районта йывăçсем лартассипе «Йывăç ларт та ăна упраса хăвар» уйăхлăх иртрĕ. Çав Указа тĕпе хурса тата район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн, Ачасен пултарулăхĕн районти çурчĕн ĕç планĕпе килĕшӳллĕн, районти çут çанталăка сыхлас енĕпе ĕçлекен комитетпа пĕрле октябрĕн 20-мĕшĕнче Муркаш ял тăрăхĕн территорийĕнче, Муркаш плотини патĕнче йывăçсем лартассипе пысăк акци иртрĕ. Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулти 9 «в», 10 «в», Муркаш лицейĕнчи 10 «т» классенче вĕренекенсем хутшăнчĕç унта. Вĕсен вăйĕпе чăваш хунавĕсем 1600 тĕп, хурăн хунавĕсем 1400 тĕп лартса хăварнă. Апла пулсан татах илемлĕрех пулĕ пирĕн тавралăх.

Шкул ачисен çĕçĕ харама каймĕ тесе шутлатпăр. Мĕншĕн тесен миçе тĕп йывăç лартса хăварнинчен миçе йывăç чĕрĕлни тата вĕсене сыхласа хăварни пысăкрах пĕлтерĕшлĕ. Апла пулсан çамрăк вăрман тăрăхне пăхса тăни кирлех пулĕ.

Кунта тата çавна та каласа хăвармалла. Кăçал апрелĕн 14-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2006 çулта Йывăç кунне халалласа йывăçсем лартассипе пурнăçламалли ĕçсен планне йышăннăччĕ. Çавна май сентябрĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн ӳкерчĕксемпе плакатсен конкурсĕсем пулчĕç. «Вăрман – пирĕн пуянлăх» ятпа вара ачасем сочиненисем çырчĕç. Кунсăр пуçне ытти тĕрлĕ мероприятисем, литературăпа музыка композицийĕсем, викторинăсем, тĕрлĕрен тĕл пулусем те сахал мар пулса иртрĕç.

2006 çулхи апрелĕн юлашки вунă кунлăхĕнче тата майăн пĕрремĕш вунă кунлăхĕнче

20-мĕшĕччен пыракан уйăхлăха хутшăнса шкулсенче «Çут çанталăка хӳтлĕх кирлĕ», «Илемлен, тăван тавралăх», «Вăрмана епле çитĕнтермелле?» тематикăлла класс сехечĕсем ирттернĕ. 1-8 классенче вĕренекен шкул ачисем хушшинче «Эсĕ йывăç лартнă-и?», «Вăрман çапла çуралать» ятпа районти шкул ачисем 1500 тĕмпе 42214 хунав лартса хăварнă, сентябрĕн юлашки вунă кунлăхĕнче тата октябрĕн пĕрремĕш вунă кунлăхĕнче – 31523 тĕмпе хунав.

Тавралăх илемĕшĕн тăрăшас ĕç йывăçсем лартассипе кăна вĕçленмест. Кунпа пĕрлех шкулсен, парксен, урамсен

территорийĕсене тасатса тирпей-илем кĕртессипе экологи субботникĕсене пĕрре кăна мар ирттернĕ. С.М. Михайлов ячĕпе хисепленекен Юнкă шкулĕнче ачасемпе çамрăксен республикăри туризмпа экскурсисен «Эткер» çурчĕн экологи дружини хутшăннипе йывăç хунавĕсем çитĕнтермелли питомник йĕркеленĕ. Муркаш плотини патĕнче Муркаш лицейĕнче вĕренекенсем лицеистсен аллейине йĕркеленĕ, Атапай шкулĕнче вĕренекенсем вара истори учительне Г.Ф. Волкова халалласа аллея уçнă. Çамрăк йывăçсене сыхласа хăварассипе те ĕçсем туса пынă. Оринин шкулĕнче вĕренекенсем «Золушка» ача сачĕн территорийĕнче лартса хăварнă улмуçисене хӳтĕлеме ятарлă хатĕрсем ăсталаса вырнаçтарса тухнă.

С. ЕГОРОВА,
район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ.

Йыхрав

Черетлĕ 13-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2006 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнчи 10 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 13-мĕш ларăвне октябрĕн 31-мĕшĕнче пухма йышăннă. Лару райадминистрацин ларусен залĕнче 10 сехетре пуçланать.

Кун йĕркине çак ыйтусене кĕртнĕ:

1. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн председателĕ çинчен.
2. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2005 çулхи октябрĕн 27-мĕшĕнчи С-1/5б № «Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн бюджет, финанс, экономика ĕçĕ-хĕлĕ, налуксемпе тӳлевсем енĕпе ĕçлекен яланхи комиссийĕн йышне çирĕплетесси çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.
3. 7 № Мăн Тутаркас суйлав округĕпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутатне суйланă А.Н. Пихтеровăн полномочийĕсене вăхăт çитмесĕрех чарса лартасси çинчен.
4. Муркаш районĕн 2006 çулхи 9 уйăхри экономикăпа социаллă аталанăвĕ çинчен.
5. Муркаш район бюджетне 2006 çулхи 9 уйăхра мĕнле пурнăçлани çинчен.
6. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2005 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнчи С-4/2 № «Муркаш районĕн 2006 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.
7. Районти коммуналлă комплекс организацийĕсен таварĕсемпе услугисен тарифĕсемпе хушма тӳлевĕсене йĕркелесе пымалли йĕрке положенийĕ пирки.
8. Муркаш районĕнче пурăнакансен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисен тарифĕсене, районти муниципаллă предприятисен таварĕсемпе услугисен тарифĕсене йĕркелесе пымалли йĕрке положенийĕ пирки.
9. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2005 çулхи июлĕн 28-мĕшĕнчи С-31/5 № «Çĕр налукĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсене, ертӳçĕсене чĕнеççĕ.

Çĕнĕ саккун вăя кĕнĕ май

Социаллă хӳтлĕх органĕсен полномочийĕсем ӳсрĕç

2005 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Граждансен уйрăм категорийĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх çăмăллăхĕсемшĕн тӳлессипе социаллă пулăшу парасси çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» Саккунĕ пичетленсе тухрĕ. Унпа килĕшӳллĕн 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ялсенче пурăнакан уйрăм граждансене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă çăмăллăхсемшĕн тӳлеме тата тĕп котельнăйсенчен ăшă илсе тăман çурт-сене топливăпа тивĕçтерме каякан тăкаксене саплаштарма социаллă пулăшу парассине социаллă хӳтлĕх органĕсем çине хунă.

Камсем кĕреççĕ-ха ку çăмăллăхсемпе усă куракансен шутне? Кунта чи малтанах патшалăх ветеринари службин специалисчĕсене, Чăваш Республики тата республика вырăнти самоуправлени органĕсем çинче шутланакан вĕрентӳ учрежденийĕсен педагогика ĕçченĕсене, тухтăрсене, провизорсене, вăтам медицина тата фармацевти пĕлĕвĕ илнĕ ĕçченсене, патшалăх секторĕнчи социаллă ĕçченсене, культура учрежденийĕсен ĕçченĕсене кĕртмелле. Вĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх çăмăллăхĕсемшĕн социаллă пулăшу парассипе уйăхсерен укçан тӳлесе тăраççĕ. Педагогика ĕçченĕсем социаллă пулăшу майне (уйăхсерен тӳлесе тăрасси е натуральнăй çăмăллăх) хăйсем суйласа илеççĕ, вĕсем ун пирки финанс çулталăкĕн декабрĕн 1-мĕшĕччен заявлени çырса пама тивĕç. Уйăхсерен епле сумма тӳлесе тăрасси пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкĕн социаллă нормин стандартĕнчен тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă çăмăллăхсен хакĕнчен килет. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн халĕ вăл Муркаш районĕнче 371 тенкĕпе танлашать.

Н. ПЕТРОВА,
районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи.

Наци проекчĕсем

Инвестицисем пур. Лайăх ĕçлемелле çеç

Октябрĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарта, Правительство çурчĕн Пысăк залĕнче "АПК аталанăвĕ" тата "Раççей гражданĕсене – туянма май пур тата хăтлă хваттер" приоритетлă наци проекчĕсене Чăваш Республикинче пурнăçа кĕртес ыйтупа канашлу иртрĕ. Ăна уçнă май Н.В. Федоров Президент çакна палăртрĕ, паянхи ĕçлĕ канашлу пирĕншĕн питĕ кирлĕ тата пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пĕр-пĕринпе уççăн калаçса наци проекчĕн икĕ тĕп программине пурнăçлас ĕç мĕнле пынине тишкермелле. Канашлу ĕçне пирĕн хăна – "Россельхозбанк" ертӳçи Ю.В. Трушин хăйĕн пулăшуçисемпе хутшăнать. Вăл Чăваш Республикинче виççĕмĕш кун ĕçлет. Тĕрĕссипе, икĕ кунлăх кăна килнĕччĕ. Пирĕн тата сирĕн интерессене шута илсе ĕç вăхăтне тăсрĕ. Канашлăва çавăн пекех мĕн пур ял тăрăхĕсен ертӳçисене, ял хуçалăх районĕсен пуçлăхĕсене, асăннă проектсене пурнăçа кĕртессишĕн яваплă çынсене чĕннĕ.

Президент Республикăра проектсене пурнăçа кĕртессипе туса ирттерекен ĕçсем çинчен кĕскен каласа пачĕ. Чăваш Ен ял хуçалăхне кăçал 3,3 миллиард тенкĕ инвестици хывнă. Çав шутра килти хушма хуçалăх тытакансем 1,5 миллиард тенкĕ çăмăллăхлă кредит (пĕтĕмпе 11 пин çемьене яхăн) илнĕ. Çитес çул кредит сумми сахалтан та икĕ миллиарда çитмелле.

РФ Ял хуçлăх министрĕпе А.В. Гордеевпа каласса татăлнă тăрăх, çитес çул республика агропромышленноç комплексне ултă миллиард тенкĕ инвестици хывма палăртаççĕ. Укçа-тенкĕ ытларах илме те май пулать. 2008 çулта вара АПКна вунă миллиард тенкĕ таран инвестици хывма шанăç пур. Президент Правительство, Ял хуçалăх министерстви, ял хуçалăх районĕсен пуçлăхĕсен умне çавăн пек пысăк тĕллев кăларса тăратнă. Президент пĕлтернĕ тăрăх, кăçал тата 2007-2008 çулсенче кашни яла хытарса тунă çулпа çыхăнтарма тăхăр миллиард тенкĕ хываççĕ.

Президент "Россельхозбанк" ертӳçи республикăра пулнă вăхăтра унпа мĕнлерех ĕçсем туса ирттерни çинчен те каласа пачĕ. Икĕ енĕ калаçса татăлнă тăрăх, çитес икĕ çулта "Россельхозбанк" Чăваш Республикине кредит хывасси сахалтан та виçĕ хут ӳсмелле, пиллĕк миллиарда çитмелле. Мĕн пур районта банк офисĕсене уçмалла. Вĕсене тума 150 миллион тенкĕрен кая мар уйăраççĕ. Ку тĕлĕшпе, "Россельхозбанк" палăртнă тăрăх, Чăваш Республики Раççейре пилотлă регион пулса тăмалла. Офиссем тунă çĕрте пирĕн республика проекчĕпе усă курĕç. Вĕсем банк ертӳçине килĕшнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче пысăк проектсем ĕçе кĕртме палăртнă. Сăмахран, хăна Шупашкарти чăх-чĕп фабрикинче пулнă чух предприятие 1,2 миллиард тенкĕ кредит уйăрасси пикри каласса татăлнă. Çапла вара фабрикăра кайăккĕшĕк йышĕпе çăмарта туса илессине икĕ хут çурă ӳстерме май пулать.

Банк ертӳçи çавăн пекех пурăнмалли çурт-йĕр строительствипе тимлĕ паллашнă. Çакна валли пĕр миллиард тенке яхăн хывма шутлаççĕ. Кунпа пĕрлех Патăрьел, Тăвай, Вăрмар районĕсенче банк пулăшăвĕпе усă курса выльăх-чĕрлĕх комплексĕсем тума тытăнаççĕ.

Банк ялти çурт-йĕр строительстви валли ипотека кредичĕ уйăрнипе пĕрлех вĕрентӳ кредичĕ те уçма палăртать. Аслă шкулта вĕреннĕ çулсенче студента кредит уйăраççĕ, уншăн каярахпа ĕç паракан саплаштарать. Çавăн пекех çăмăллăхлă кредит уйăрса ялти пурăнмалли çурта çут çанталăк газĕ кĕртме пулăшаççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, республикăна газификацилесе çитернĕ, анчах ялти хăш-пĕр çынсем çак ĕçе вăхăтра ĕлкĕреймен. Банк шăпах çавăн пек çынсене пулăшма хатĕр.

Ял хуçалăх продукчĕсене вырнаçтарас тата сутас ĕçре пĕрлехи вăйпа ĕçлеме каласса татăлнă. Сăмах Шупашкарти Николаев урамĕнчи "Чăваш Ен апат-çимĕç" унитари предприятийĕн пасарĕ çинчен пырать. Ăна çитес вăхăтра тĕпрен çĕнетмелле. Ку пасарта ялти мĕн пур тавар туса илекенсем, пысăк, вăтам ял хуçалăх организацийĕсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, уйрăм хуçалăх тытакансем, усламçăсене хутшăнтармасăр, хăйсен продукцине сутма тытăнмалла. Çавна валли ял сутуçисене вăхăт таппине тивĕçтерекен суту-илӳ вырăнĕ тата оборудовани уйăрса параççĕ. Паллах ĕнтĕ, ял çыннин апат-çимĕçĕ лайăх пахалăхлă пулмалла. Çĕнĕ пасарта сутă тума ял халăхне халĕ йĕркеленекен потребитель кооперативĕсем пулăшăç. Пасар çитес çул тыр-пул пухса кĕртме тытăннă кунсенче хута каймала. Паллах ĕнтĕ, укçа-тенкĕ уйăрассине "Россельхозбанк" хăй çине илет.

Л. АЛЕКСЕЕВ.

"Хыпар" хаçатран.